28.-мĕш çул тухăть. Хакĕ 20 пуç.

1945
ИЮНЬ
2
ШĂМАТКУН
№ 105(6856)

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарар

Пирĕн çĕршыв вăйлă та хăватлă пултăр тесен, рабочисемпе колхозниксен пурнăçне малалла лайăхлатса пырас тесен, пирĕн колхозсемпе совхозсенче тата уйрăм колхозниксен килĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕшшине пĕрмай ӳстерсе пыни кирлĕ. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне кашни район, кашни колхоз ытлаш. шипех тултарса пыни кирлĕ. Етĕрне, Советски, Октябрьски, Çĕрпӳ районĕсенче çакна яланах асра тытса ĕçлесçĕ. Вĕсем кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çултăкри плана пур выльăхсем енĕпе те тултарчĕç. Кунпа пĕрлех, малта пыракан çак районсенчи колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ памалли обязательствăсене та вăхăтра тултарма тăрашаççĕ. Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец», «Дружба» колхозсем хăйсен обязательствисене пĕтĕмпех тултарнă.

Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртесси кашни колхозăн чи малтанхи тата хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать. Республикăри пумай колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ вăхăтра парса татас тесе тимлĕн ĕçлесçĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ парса татнă колхозсене пумай илсе кăтартма пулать. Красноармейски районри колхозсем аш-какай памалли çултăкри плана 71 процент, çăмарта памалли плана 82 процент тултарнă. Куславкка районĕнчи «Новая жизнь», «Красноармеец» колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ парса татнă. Халĕ кашни районрах государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцине срокчен парса татассишĕн социализмлă ăмăртӳ сарăлса пырать. Çак паха пуçарăва Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз тата Ишлей районĕнчи «Пархикасси» колхоз пуçласа ячĕç. Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз государствăна аш-какай парса татнă, сĕт-çу, çăм тата çăмарта памалли плансене те июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне парса татма обязательство илсе, пĕтĕм республикăри колхозсем патне ятларласа пыру сырчĕ. Çак сырăва сӳтсемĕсва, халĕ колхозсем конкретлă обязательствăсем илеççĕ.

Анчах та çакна палăртмалла: выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ хатĕрлесси, пĕтĕм республикипе илсен, çителĕксĕр пырать-ха. Республика аш-какай хатĕрлемелли плана 92 процент, сĕт-çу планне 12,5 процент, çăмарта хатĕрлемелли плана 8 процента çăм, çăм хатĕрлемелли плана 6,4 процент кăна тултарнă. Çаксем вĕсем хатĕрлев ĕçĕ мĕн таран çителĕксĕр пынине кăтартса параççĕ. Уйрăмăнах Ишпреç, Канашкино, Комсомольски, Первомайски, Шăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсем чăтма çук юлса пыраççĕ. Первомайски районри колхозсем государствăна аш-какай памалли плана 70 процент, сĕт-çу памалли плана 9,5 процент, çăмарта памалли плана 2,8 процент, çăм памалли плана 3,2 процент кăна тултарнă, Шăмăршă районĕ аш-какай памалли плана 14,3 процент, сĕт-çу памалли плана 2,4 процент, çăмарта памалли плана 1,7 процент, çăм памалли плана 3,3 процент кăна тултарнă. Çак районсем юлса пыни, чăн малтанах, районсен руководителĕсемпе хатĕрлев организацийĕсем, потребительсен кооперацийĕнче ĕçлекенсем хăйсен ответлăхне туйăçăр ĕçленинчен килет. Комсомольски район аш-какай парас енĕпе республикăна 24-мĕш вырăн, сĕт-çу парас енĕпе 26-мĕш вырăн йышăнать. Кунта паянхи кун тĕлне те 20 колхоза яхăн государствăна кăçалхи çулшăн сĕт-çу пама тытăнман. Çак районри «Красный маяк», «Большевик», «Восход» тата ытти хăшпĕр колхозсем государствăна сĕт-çу парас енĕпе нимĕн те тумаççĕ. Комсомольски таврăнăшĕ Александровка ял Совечĕсене кĕрекен колхозсем сĕт-çу пухас енĕпе ĕçлекен çынсене те уйăрса лартман. Хатĕрлев комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Порфирьев юлташ сĕт-çу хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Маслопром конторин управляющийĕ Скорнякова юлташ та ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларать.

Май уйăхĕнче колхозниксенчен, уйрăм хуçалăхсенчен сĕт илме республикăра çĕнĕрен 28 пункт уçмалла пулнă, анчах та вырăнти организацисем тата Маслопромăн республикăри контори çителĕксĕр ĕçленине пула, çак пунктсем чылай районсенче ĕçлеме тытăнман-ха.

Аш-какай парас ĕçре колхозсемпе колхозниксем выльăхăн самăртса пани калама сук пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн уйрăм колхозсем государствăна аш-какай панă чухне час-часах ырхан та начар выльăхсем параççĕ. Государствăна вăтам е начар выльăх панă чух вĕсен чĕрĕ виçи сахал пулать, çапла вара выльăхсен шучĕ ытларах каять, колхозри выльăх шучĕ нумай чакать. Колхозсем государствăна паракан выльăхсене самăртса памалла. Малта пыракан колхозсем çапла тăваççĕ те. Муркаш районĕнчи колхозсем государствăна обязательство тăрах аш-какай памашкăн 485 сысна самăртма хушнă. Октябрьски районри колхозсем 346 сысна, Чурачăк районĕнче 240 сысна, Вăрнар районĕнче 400 сысна самăртаççĕ. Çав вăхăтрах Ишпреç, Кувакино, Первомайски; Пăрачкав, Çĕмĕрле, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсем пĕр выльăх та самăртма тăратман. Иртнĕ çулхи йăнăшсенчен çак районсен руководителĕсен тивĕçлĕ вывод тумалла. Государство умĕнчи обязательствăна паха аш-какай парса тултармалла, çапла вара выльăх-чĕрлĕх шутне ытларах сыхласа хăварассишĕн кĕрешмелле.

Çăмарта хатĕрлесси—паянхи ĕç. Çак ĕçе пĕтĕмпех потребительсен кооперацийĕ çине хунă. Ялсенче потребкооперацин системинче çăмарта пухас енĕпе 1308 çын ĕçлет. Ялпосем çук ялсенче ятларласа килĕрен сӳресе çăмарта пухакансем уйăрнă. Çак ĕçе лайăх организацилеме Красноармейски, Куславкка, Элĕк, Етĕрне, Çĕрпӳ районĕсенче çăмарта пухас ĕç чылай лайăх пырать. Шупашкар районĕнчи Хыркассинчи ялпо хăйĕн çăмарта пухмалли планне 50 процент ытла тултарнă. Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри, Уравăшри ялпосем çăмарта пухмалли плана 75 процент ытла тултарнă. Кунта килĕрен пухса сӳрекенсем кашни кун тенĕ пекех колхозниксемпе колхозницăсем тата уйрăм хуçалăхпа пурăнакансем патĕнче пулаççĕ, çăмарта вăхăтра панин усси çинчен колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Анчах та Пăрачкав районĕ паянхи кун тĕлне çăмарта пухмалли плана 0,6 процент, Шăмăршă районĕ 0,7 процент, Кувакино районĕ 1,2 процент, Çĕмĕрле районĕ 0,7 процент кăна тултарнă. Çак районсенче çăмарта пухас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ тесен те юрать. Кувакино районĕнче çăмарта хатĕрлес тĕлĕшпе ялпосем кăна мар, райсоюз председателĕн хатĕрлев енĕпе ĕçлекен заместителĕ Е. Белякова юлташ та пĕр уйăх хушши нимĕн те туман. Çапла вара Кувакино ялповĕнче çăмарта хатĕрлес ĕç пуçланнăранпа та 500 çăмарта кăна пухнă. Тӳрех калас пулать, Чăвашсоюзăн хатĕрлев контори те Белякова пек ĕçлекенсемпе килĕмсе ларать. Çак вăхăта çитсе те конкретлă кăтартусем пани, начар ĕçлекенсене тивĕçлĕ ответ тыттарни пулман. Халĕ çăмарта хатĕрлемелли чи паха вăхăт. Хатĕрлев ĕçĕнчи работниксен, партипе совет организацисен тата колхоз руководителĕсен çак ĕçе кирлĕ пек организацилемелле. Çăмарта хатĕрлемелли плана июнь уйăхĕнче тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, планран иртерсе çăмарта параканасене хавхалантармалли тававрсене вăхăтра тата пĕтĕмпех вырăна çитермелле.

Çăм хатĕрлесси пур районсенче те тенĕ пекех ытла та çителĕксĕр пырать. Ку тĕлĕшпе малта пыракан Тăвай, Шăхасан, Муркаш тата ытти хăшпĕр районсем те плана 20 процента яхăн кăна тултарнă. Колхозсем, колхозниксем тата единоличниксем хальхи вăхăтра сурăх çăмне касаççĕ. Çавăнпа та хатĕрлев организацийĕсен çăм пухас тата сутăн илес ĕçе халĕ уйăрмах лайăх организацилемелле.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш республики 25 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарни—хамăр çĕршыва тĕреклетессишĕн, Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç тата ытти продуктсем вăхăтра парса тăрассишĕн кĕрешни пулать.

Колхозниксемпе колхозницăсем тата единоличниксем хушшинче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе лайăхлатса, Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцине пĕтĕмпех парса татассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырар!

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне Л. А. Говорова „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăласси çинчен

Ленинград патĕнче тата Балтика тăрăхĕнче немĕç çарĕсене хирĕç пынă вăрçара пысăк çапăсусене ертсе пырас ĕçре Верховный Главнокомандовани панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Совет Союзĕн Маршалне Леонид Александрович Говорова «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи майăн 31-мĕшĕ.

Ĕççыннн депутачĕсен районсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, суракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри ХИ СЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

59. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ П. Г. Медведев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Н. Инжендеева юлташ).
60. «Крестьянин» колхоз (председателĕ П. Г. Зыков юлташ).
61. «Путь к социализму» колхоз (председателĕ П. В. Бардасов юлташ).
62. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Н. А. Карпов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ М. Г. Васильева юлташ).

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

63. «Чувашия» колхоз (председателĕ К. М. Моисеев юлташ).
64. «Красноармеец» колхоз (председателĕ Архипов юлташ).
65. «Малалла» колхоз (председателĕ Степанов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Иванов юлташ).
66. «Победа» колхоз (председателĕ Трошкина юлташ).
67. «Первое мая» колхоз (председателĕ Малова юлташ).

СĔНТĔР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

68. «Пахарь» колхоз (председателĕ Тимаков юлташ).
69. «Сеялка» колхоз (председателĕ Пальков юлташ).
70. «Новый путь» колхоз (председателĕ Любимов юлташ).
71. «Ударник» колхоз (председателĕ Сыров юлташ).
72. «Новая Юнга» колхоз (председателĕ Ванюшкина юлташ).
73. 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Елагин юлташ).
74. Калинин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Киликов юлташ).
75. «Путь Ильича» колхоз (председателĕ Седатлов юлташ).
76. «Волга» колхоз (председателĕ Ефремов юлташ).

КАНАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

77. «Броневик» колхоз (председателĕ Григорьев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Михайлов юлташ).
78. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васькин юлташ).
79. «Правда» колхоз (председателĕ Григорьев юлташ).
80. «Динамо» колхоз (председателĕ Петров юлташ).
81. Доронин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Филиппов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Кузьмин юлташ).
82. «Красная звезда» колхоз (председателĕ Ерицев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Нягина юлташ).
83. «Красное пламя» колхоз (председателĕ Васильев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Щипцов юлташ).

ЧКАЛОВСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

84. «Гвардеец» колхоз (председателĕ Р. А. Баранов юлташ, колхоз агрономĕ Е. Мышкина юлташ).
85. «Броневик» колхоз (председателĕ Петров юлташ).
86. Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ О. Ф. Каштанова юлташ).

Советски район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă

СОВЕТСКОЕ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТЕЛЕГР АФПА). Районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 104 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 134 процент, сурăхсем енĕпе 132 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ К. КУДРЯШОВ.

Октябрьски район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă

ОКТЯБРЬСКОЕ, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФПА). Октябрьски районри колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 101 процент, майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 102 процент, сурăхсем енĕпе 136 процент, сыснасем енĕпе 124 процент тултарчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Г. АЛЕКСЕЕВ,
Райисполком председателĕн заместителĕ ЛЕОНТЬЕВ.

Çĕрпӳ районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çултăкри плана тултарчĕ

ÇĔРПӲ, июнĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Республика 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленсе, районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Район çак питех те паха ĕçре пысăк çитĕнӳ турĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те ытлашшипех тултарчĕç. Лашасем ĕрчетмелли плана район 103,6 процент, майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли плана 105,2 процент, сурăхсем ĕрчетмелли плана 135,6 процент тата сыснасем ĕрчетмелли плана 124,4 процент тултарчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе уйрăмах лайăх ĕçлекен колхозсене чылай кăтартса пама пулать. Сăмахран, «Сталинец» колхоз (колхоз председателĕ Захаров юлташ, фермăсен заведующийĕ Васильев юлташ) лашасем ĕрчетмелли плана 100 процент, майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли плана 100 процент, сыснасем ĕрчетмелли плана 166 процент, сурăхсем ĕрчетмелли плана 171 процент тултарнă. «Дружба» колхоз (колхоз председателĕ Тимофеев юлташ, фермăсен заведующийĕ Алексеев юлташ) лашасем ĕрчетмелли плана 100 процент, майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли плана 144 процент, сыснасем енĕпе 145 процент, сурăхсем енĕпе 162 процент тултарнă. Çак колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ памалли обязательствăна та пур енĕпе те пурнăçа кĕртнĕ. Çаван пекех «Ĕмĕт» колхоз та (колхоз председателĕ Николаев юлташ, фермăсен заведующийĕ Грачев юлташ, парторганизаци секретарĕ Иванов юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе уйрăмах лайăх ĕçлет. Вăл лашасем ĕрчетмелли плана 103 процент, майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли плана 118 процент, сыснасем ĕрчетмелли плана 100 процент, сурăхсем ĕрчетмелли плана 129 процент тултарнă. Государствăна аш-какай памалли обязательствăна çак колхоз 76 процент, сĕт памалли плана 100 процент, çăмарта памалли плана 65 процент пурнăçланă.

Районри колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса пырса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обком бюровĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илессишĕн тимлĕн кĕрешеççĕ.

Д. МИТЬКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

4 КОМБАЙН ЮСАНА

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн МТС суракине ăнăçлăн вĕçлерĕ. Халĕ тракторсем ирхи çĕртме сухи тăваççĕ. Паянхи кун тĕлне пурĕ 450 гектар ытла сухалаланă.

МТС 12 комбайна та юсама тытăнăнă. 4 комбайн юсаса пĕтернĕ, вĕсене государство комиссийĕ лайăх пахалăхпа юсанă тесе йышăнчĕ. Комбайнсене юсас ĕçре Степанов, Павлов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен комбайнĕсене юсаса пĕтернĕ хыççăн, ытти бригадăсенчи комбайнсене юсама пулăшаççĕ. Машинăсем юсанă çĕрте ĕçлекен Терентьева кулленхи нормăна 130—150 процент тултарать. Комбайнерсем, трактористсем тата ремонтра ĕçлекен ытти рабочисем те тырпул пухмалли машинăсене июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтересшĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

М. НИКОЛАЕВА,
МТС-ăн старшин агрономĕ.

Ферма çумĕнчи участока акрĕç

Муркаш районĕнчи «Восток» колхозра ферма çумĕнчи 4 гектар çĕре фермăра ĕçлекенсен вăйĕпе акнă. Ферма заведующийĕ А. Кулькова юлташ çак ĕçре уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине организацилеме.

П. СМИРНОВ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче пулса иртнĕ йышăну

Майăн 31-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Çĕнтерӳ Кунĕ ячĕпе дипломати корпусне йышăннă. Йышăнура çаксем пулнă: США Президенчĕн Г. Трумэн господинăн представителĕ Г. Гопкинс господин, Ют çĕршывсен посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсемпе ответлă сотрудникĕсем, çар, тинĕс-çар тата авиаци атташисемпе вĕсен помощникĕсем, çар миссийĕсен начальникĕсемпе членĕсем пулнă.

Йышăнура тата çаксем пулнă: СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ Н. М. Шверник, А. Н. Косыгин, СССР Халăх Комиссарĕсем—флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, А. И. Шахурин, В. А. Малышев, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, И. Т. Тевосян, М. Г. Первухин, Г. А. Митерев, А. Г. Зверев, К. Я. Сергейчук, Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный, артиллерин Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, авиацин Главнăй Маршалĕ А. А. Новиков, армин генералĕ А. И. Антонов, авиаци Маршалĕ Ф. А. Астахов, авиаци Маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, бронетанковăй çарсен Маршалĕ П. А. Ротмистров, артиллери Маршалĕ Н. Д. Яковлев, çыхăну çарĕсен Маршалĕ И. Т. Пересыпкин, Совет Союзĕн виçĕ хут Геройĕ А. И. Покрышкин полковник, Хĕрлĕ Çар командирĕсем, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем С. А. Лозовский, С. И. Кавтарадзе, М. М. Литвинов, И. М. Майский, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн, Наркомвнешторгăн, СССР Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем, çаван пекех тата ученăйсем, писательсем, артистсем, совет хăçачĕсемпе ют çĕршывсенчи хăçатсен представителĕсем. (ТАСС).

Çулйĕр строительствинчи çирĕмкунлăх

Малта пыракан бригадăсем

ИШЛЕЙ, майăн 31-мĕнĕ. (Телефонпа). «Пархикасси», «Çĕньял», «Эстафета», «Осоавиахим» тата «Хĕрлĕ Ялăш» колхозсем çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне хастарлăн хутшăнчĕç. Ку колхозсем Шупашкарпа Вăрнар хушшинчи мăн çул çинче ĕçлеççĕ. «Эстафета» колхозăн çулйĕр бригади (бригадирĕ М. Савельев юлташ) кашни кун 8 кубометр вырăнне 12 кубометр хăйăр турттарать. Бригада членĕсем Л. Волков, В. Федоров, И. Кушников пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

«Пархикасси» колхозăн М. Щербакова юлташ ертсе пыракан çулйĕр бригадийĕ те кулленхи нормăна 120—130 процент тултарать. Бригадăри Ф. Толстова, Е. Суркова тата Н. Федорова колхозницăсем çул çинче ир пуçласа кăçченех ĕçлеççĕ.

«Хĕрлĕ Ялăш» колхозăн Ф. Кудряшова бригади те мăн çула якатас, хăйăрпа чул турттарас ĕçре тăрăшса ĕçлет. Ку бригада хăйăрпа чул турттармалли задание июнĕн 10-мĕшĕччен тултарассишĕн кĕрешет.

Анчах та районри «Хачăк», «Сăхорнай» колхозсем çулйĕр строительствине хутшăнман-ха. Кун каçа тунă ĕçе йышăнманни те çулйĕр строительствинчи çитменлĕх пулса тăрать. Хăшпĕр çĕрте колхозниксем ăçта ĕçлемеллине малтанах кăтартса паман пирки ĕçе тухсан каллех тавăрăнаççĕ. Çаван пек, çирĕмкунлăх пуçлансанах «Парижская Коммуна» колхозран 10 çын каллех таврăннă.

В. ГУСЬКОВ.

Çулсем çинче ĕç пуçланчĕ

СОВЕТСКОЕ. (Телефонпа). Районăн çирĕмкунлăхра 14,5 километр çул, 220 погоннăй метр кĕпер юсамалла, 96 погоннăй метр çĕнĕрен тумалла. Çавна валли 4080 кубометр хăйăр, 450 кубометр йывăç кирлĕ. Халĕ чылай колхозсем вăрман касаççĕ, хăйăр кăларса турттараççĕ. Ямашпа Этмен хушшинчи тата Исменĕр çумĕнчи кĕперсене юсама тытăннă. Етĕрнепе Вăрнар хушшинчи çула якатаççĕ, йывăç лартса илемлетеççĕ. Ку тăрăхчен 2.000 тĕп йывăç лартнă.

Çирĕмкунлăх пуçланнăранпа 5 кун иртрĕ пулин те, Çухрапа Советски ял Совечĕсенчи колхозсем çул çине ĕçлеме тухман.

А. МАЛИНИН,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

„Исаково" колхоз çирĕмкунлăха хутшăнман

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне хутшăнса, «Правда» колхоз 32 кубометр чул кăларса хатĕрленĕ. Чул кăларнă çĕрте 63 çулхи В. Павлов, У. Тимофеева, А. Дмитриева, А. Федотов тата С. Прошкин лайăх ĕçленĕ. Кăларнă чула халĕ район центрне турттараççĕ.

«Комбайн» колхоз 70 кубометр чул кăларса хăйĕн планне тултарнă. Отечественнăй вăрçă инвалидĕ В. Антонов 2 кубометр, П. Фоминпа М. Ефремов колхозниксем пĕрер кубометр чул кăларнă.

«Победа» колхоз та чул кăлармалли задание пурнăçа кĕртнĕ. Халĕ кунти çулйĕр бригади çулсене юсаса якатать.

Çав вăхăтрах çирĕмкунлăха хутшăнман колхозсем те пур-ха. «Исаково» колхозăн 140 кубометр хăйăр турттармалла. 4,5 километр çул юсамалла тата Шупашкартан 9 кубометр йывăç турттарса килмелле. Çак ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе колхозра нимĕн те тумаççĕ. Колхоз председателĕ А. Андреев юлташ çулйĕрсене юсас ĕçе иккĕмĕш черетлĕ ĕç тесе шутлать.

С. ШАДИН.

Чулпа хăйăр хатĕрлеççĕ

ШĂХАСАН, майăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз çирĕмкунлăх пуçлансан малтанхи кунах Канашпа Шупашкар хушшинчи çула юсама тухрĕ. Паянхи куна колхоз хăйăрпа чул хатĕрлемелли плана тултарнă. Пурĕ 56 кубометр чул, 100 кубометр хăйăр хатĕрлесе турттарнă.

Анчах та колхоз ял хушшинчи кĕперсене юсама тытăнман-ха. Канашпа Атнаш хушшинчи çула та юсамалла.

(Хăмăр корр.).

Тĕп цехсем уйăхри плана тултарчĕç

КАНАШ, майăн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне вагонсем юсакан завод иккĕмĕш уйăх тытать. Апрель уйăхĕнчи ĕçсемшĕн те ялава завод аллинчех хăварнă.

Хĕрлĕ Ялавлă завод коллективĕ май уйăхĕнче татах та лайăхрах ĕçлет. Тĕп ĕçсем график тăрăх пулса пыраççĕ. Вагонсем юсамалли плана ирттерсе тултарнă. Уйрăм участоксем вара уйăхри задание срокченех пурнăçа кĕртрĕç. Дорошенко начальник пулса ертсе пыракан вагонсем юсакан колонна уйăхри задание 26 кун хушшинчех 102,5 процент тултарчĕ. Çак колоннăра ĕçлекенсем уйăх вĕçленичченех татах та 7 вагон юсаса кăларма сăмах панă.

Вагонсем тăвакан цех (начальникĕ Белов юлташ) уйăхри плана—108 процент, тимĕр-тăмăр шăратакан цех (начальникĕ Бессонов юлташ)—101,3 процент тултарчĕç. Кустăрмасемпе рессорсем тăвакан цехсем те ку уйăхра лайăх ĕçлерĕç.

Сталин юлташ вăрçă чăрăннă хыççăн халăха чĕнсе калани çине ответлесе, заводри рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Формовщик Котляренко, çамрăк рабочисем Кирилловпа Курбатов куллен никĕсленĕ норма тултараççĕ. Шăратакан цехри Ализова бригади те нормăна икĕ хут ытларах тултарса ĕçлет. Вагонсем тăвакан цехри Быков бригади çак уйăхри задание срокран 5 кун малтан пурнăçа кĕртрĕ.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава май уйăхĕнчи ĕçсемшĕн те пирĕн завод аллинчех хăварасса шанатпăр.

М. ДМИТРИЕВ,
ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ.

Юбилей умĕнхи çитĕнӳсем

КУСЛАВККА, майăн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинат коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнине ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Бродский юлташ начальник пулса тăракан цех май уйăхĕнчи плана 25 кун хушшинчех тултарчĕ.

Ольма юлташ ертсе пыракан цех та аван ĕçлет. Вăл цех графикпа пăхнинчен кажин кун 2,5 хут ытларах продукци туса кăларать. Конюшина мастер группи нормăна кунсерен 250 процент тултарать.

Хитин юлташ ертсе пыракан цех та çак кунсенче графикпа пăхнинчен тухăçлăрах ĕçлет. Ку цехри рабочисем нормăна ик-виç хут ирттерсе тултараççĕ.

Комбинат коллективĕ рабочисен поселокне юсаса йĕркелес ĕçе те тытăнчĕ. Халĕ завод картишне тасатаççĕ, йывăçсем лартаççĕ.

АКАДЕМИК В. КОМАРОВ

СССР Наука Академийĕн Президенчĕ

Чаплă юбилей

СССР Наука Академийĕ 220 çул тултарнă тĕле

Гитлерăн вăрă-хурахла империализмне хирĕç пынă вăрçăра совет халăхĕ вăрçă тĕлĕшпе кăна мар çĕнтерӳ турĕ. Çав вăрçăра совет патриотизмĕн идейи çĕнтерчĕ. Совет патриотизмĕнче ССР Союзĕнчи халăхсен нацийĕ традицийĕсем мĕнпур ĕçĕ-шăнисен пĕрлĕхлĕ пурнăç интересĕсемпе пĕтĕçсе тăраççĕ. Расăсемпе нацисен пĕртанлăхĕн, халăхсем пĕр-пĕринпе пĕтĕçсе туслăн пурăнассинчи аслă идейисем гитлеровецсен тискер кайăкла национализмĕн тата ытти расăсене хурăманлăхĕн идеологине çĕнтерчĕç. Вăрçăра тăшмана вырăс салтакĕн паттăрлăхĕпе хастарлăхĕ кăна мар, аслă Сталин генийĕ ĕртсе тата хавхалантарса пыракан пирĕн генералсен çивчĕ ăс-тăнĕпе полководецла ăсталăхĕ кăна мар çĕнтерчĕç. Пирĕн Тăван çĕршыв хăйĕн культурипе техники çав тери çулте тăнипе те тăшмана çĕнтерчĕ.

Сталинла Конституци хĕвелĕ çутатса тăракан çĕр çинче культурăпа техника халиччен нихăçан пулман пек ӳссе чечекленчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ вырăссен чаплă ученăйĕ Иван Петрович Павлов хăй вилес умĕн çамрăксене пехиллесе сырнă сырăвĕнче çапла калана: «Пирĕн Тăван çĕршыв ученăйсем валли аслă çул. сем ӳсса парать, пирĕн çĕршывра наукăна хăюллăн тата анлăн пурнăçа кĕртсе пынине тивĕçлĕ вырăна хурса хакламалла».

Пирĕн халăхпа правительство наукăна аталантарассишĕн тимлĕн тăрăшнине Наука Академийĕ 220 çул тултарнине чаплăн уявласа ирттерме хатĕрленни те кăтартса парать.

Российăри Наука Академийĕн никĕсне Пĕрремĕш Петр хывнă. Пĕрремĕш Петр вăхăчĕ—Российăна пĕтĕм тĕнчери аслă держава туса çирĕплетес тĕлĕшпе пурнăçа кĕртнĕ пысăк та паха ĕçсен вăхăчĕ пулса тăрать. Çĕршывра суту-илӳпе промышленность аталанса пынă, крепоссемпе портсем тата каналсем тунă, хăватлă çарпа пĕрремĕш класра тăракан флота туса йĕркеленĕ. Российăн çурçĕрти çыранĕсем Америка çĕрĕпе çыпçăнса тăнипе тăманнине тĕпчесе пĕлме Пĕрремĕш Петр аслă экспедици янă. Пушкин Пĕрремĕш Петр самани çинчен çапла сырнă: «Россия Европăна тин туса пĕтернĕ карап пекех кĕрсе кайнă,—çав вăхăтра пуртăсен сасси тата тупăсен кĕрлевĕ илтĕнсе тăнă. Аслă Петĕр патша туса ирттернĕ вăрçăсем тĕрĕс те ăнăçлă вăрçăсем пулнă. Çĕршыва урăхлатса йĕркелесси Полтава патĕнчи çапăçăва пула ăнăçлăн пулса пынă, Европăри çутă çавăн хыççăн вара çĕнтерсе илнĕ Нева çыранĕсем патне çитнĕ».

Российăра Наука Академине тăвасси Пĕрремĕш Петр саманинче çĕршывра пулса ирттĕ историллĕ пысăк ĕçсенчен тухса тăнă. Наука Академине тăвасси ăнсăртран килсе тухнă ĕç пулман, çакă вăл тивĕçлипех аслă державăн историллĕ аталанăвĕнчен килнĕ. Российăри культурăпа наука, Киев Руçĕн чаплă культурinчен тымарланса ӳссе çитĕннĕскерсем, XVIII-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕ тĕлне аталанса чылай малалла кайнă, Наука Академине туни вара вырăссен анлăн культурин чи çуллĕ тӳпи пулнă. Çакăнпа пĕрлех вăл Россия экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен пысăк утăм тунине палăртса тăнă тата вăйлăн ӳссе пыракан çĕршывăн çĕнĕ ыйтăвĕсене тивĕçтернĕ.

Пĕрремĕш Петр хăй çĕршыва урăхлатса йĕркелес тата халăха çутта кăларас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсенче пĕччен пулман. XVIII-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Пĕрремĕш Петрпа пĕр вăхăтра чаплă историк В. Н. Татищев, географ И. К. Кириллов. хăй тĕллĕн вĕренсе çитĕннĕ экономист И. Т. Посошков, тĕн енĕпе ĕçлекен палла деятель, Пĕрремĕш Петр туса ирттерекен реформăсем майлă тăнă архиепископ Феофан Прокопович тата ытти сем те пулнă. Вĕсем Петра унăн çĕршыва урăхлатса йĕркелемелли хăюллă ĕмĕчĕсене тата Академие туса йĕркелес ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пулăшнă.

Пĕрремĕш Петр Академине туса йĕркелесси çинчен калакан Указа 1724 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче алă пуснă. Академи 1725 çулта ĕçлеме тытăннă. Петербургри Академие чаплă ученăйсене—Леонард Эйлора, Даниил Бернуллине, Иосиф-Николай Делиле тата ытти сене те ĕçлеме чĕннĕ, тепĕр 15 çултан вара вырăс халăхĕ Наукă Академине хăйĕн гениллĕ ученăйне Михаил Васильевич Ломоносова пани.

Историре халăхсем хăйсен пурнăçĕнчи уйрăм саманасене палăртакан ятсем пур. Америка халăхĕ çавăн пек ятсен шутне тивĕçлипех Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи обществăшăн усăллă мĕнпур учрежденисене пуçарса яракана, революциллĕ кĕрешӳре хавхалантаракана тата чаплă ученăя Вениамин Франклина кĕртет. Вырăс халăхĕ çара çавăн пек ятсен шутне Ломоносова кĕртет.

Ломоносов физикăпа хими, географипе астрономи, геологипе металлурги наукисен пĕрлĕ ĕçĕсенче паха открытисем тунă, çав открытисене вăл тĕрлĕ наукăсене пĕтĕçтерсе кăна мар, хăйĕн гениллĕ ăсĕпе çав наукăсем хушшинчи чикĕсене çĕнтерсе пырса тунă. Этем пĕлĕвĕн тĕрлĕ ĕçĕсемпе енĕсенчи методсемпе результатсене пĕтĕçтерсе тата теориллĕ наукăсене практикăллă наукăсемпе таччăн çыхăнтарса, вăл газсен молекуллă теорине аталантарнă, ăпаласемпе энерги сыхланни çинчен вĕрентекен закона малтанах палăртса панă, çутă ĕçне вĕрентекен оригинальă теорине аталантарнă, физикăллă химии пĕрремĕш эскизĕсене палăртса хунă, кантăк шăратмалли технологине тĕпчесе пăхнă, оптикăллă инструментсем туса хатĕрленĕ, мозаикăллă пысăк картинăсем тунă, астрономипе геологи тата географи тĕлĕшпе тĕпчевсем туса ирттернĕ, вырăс историйĕн теорийĕ тĕлĕшпе вилĕмсĕр ĕçсем туса хăварнă. Михаил Васильевич Ломоносов çавăн пекех тата вырăссен пĕрремĕш грамматикине тăваканĕ те пулнă. Çакăн пек ĕнтĕ вырăссен аслă ученăйĕн ятне ĕмĕр манмалла мар çирĕплетесе хăварнă нумай ĕçсен тулли мар хисепĕ.

СССР Наука Академийĕн Президенчĕ В. Л. Комаров академик.

Петербургри Наука Академийĕ хăйне усрăнă хыççăнах нĕтĕм тĕнчипе паллă пулса тăрать. 1728 çулта Академин ăслăлăх кĕнекисем тухма тытăнаççĕ, вĕсене «Академические комментарии» текен ятпа кăларса тăраççĕ. 1734 çулта Бернулли Эйлера çапла сырнă: «...Петербургра тухакан мемуарсене мĕн тери хытă ыйтнине эпĕ Сире кирлĕ таран ăнлантарса панă пултараймастăп», тенĕ. Бюльфингер физик 1731 çулта çапла калана: «...Кам çутçанталăк тата математика наукисене тĕплĕн вĕренес тет, çавă Парижа, Лондона тата Петербурга каять. Унта пур енĕпе те вĕреннĕ çынсем тата инструментсен запасĕ пур. Çав наукăсене хăй лайăх ăнланакан Петр вĕсем валли кирлĕ япаласене пурне те пухма пĕлнĕ. Вăл кĕнекесен паха запасне, хаклă инструментсене, çутçанталăкăн тинĕссем леш енчен илсе килнĕ паха япалисене, искусство произведенийĕсене, пĕр сăмахпа каласан, пĕлекен çынсем хисеплеме тивĕçлĕ тесе йышăннă япаласене пурне те пухнă».

XVIII-мĕш ĕмĕрте Наука Академийĕн çĕç икĕ тĕп енĕпе пулса пынă. Пĕр енчен—математикăпа çутçанталăк наукисем пулнă. Ку енĕпе гениллĕ математик Эйлер тата чаплă естествоиспытатель Вольф ĕçленĕ; тепĕр енчен тата Российăн çутçанталăкри ресурсĕсене, унăн халăхĕн составне тата çĕршывăн географиллĕ чикисене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Наука Академийĕ XVIII-мĕш ĕмĕрĕн çурринче туса ирттернĕ çав тери пысăк экспедицисене Паллас, Гмелин, Лепехин, Зуев, Севергин, Озерцовский, Крашенников ученăйсем хутшăннă. Российăн Европăпа Азири пайĕсене тĕпчесе вĕрентес тĕлĕшпе туса ирттернĕ çав ĕçсене кура, ют çĕршыв çыннисем урăх нименле çĕршыва та вăл вăхăтра Российăна тĕпчесе вĕреннĕ пек тĕпчесе вĕренеймен тесе калаççĕ.

XIX-мĕш ĕмĕрте те вырăс ученăйсен чаплă ячĕсем нумай палăрнă, вĕсем унчухнехи наукăн историне кĕнĕ. Çав ученăйсен ячĕсемпе этемлĕх пĕлĕвĕ аталаннă çул çинчи уйрăм тапхăрсене палăртнă, вĕсем наукйра çĕнĕ дисциплинăсен никĕсĕсене хывнă. Çав ятсен шутне пуринчен малтан Лобачевский, Менделеев, Чебышев, Сеченов, Мечников ячĕсем кĕреççĕ. Анчах çав ученăйсем патша Российинче час-часах пĕччен тăрса юлнă, вĕсем халăхран татăлса пурăннă.

Патша власне сирпĕтсе антарнă Октябрьти революци наукăпа халăх хушшинчи хӳмене ишĕлтерчĕ, наукăпа пурнăç хушшинчи уйрăмлăха пĕтерчĕ тата наукăн тавракурăмне халиччен нихăçан пулман пек аслăлатрĕ.

ССР Союзĕ культурăпа наукăна чăннипех аслăн чечеклентериĕ çĕршыв пулса тăрать. Пирĕн çĕршывра наука, творчество, изобретательство енĕпе ĕçлеме çав тери пысăк майсем туса панă. Совет правительстви наукăна аталантарма çулсерен миллиардшар тенкĕ укçа парать. Революциччен Российăра наука сотрудникĕсем пулса 5.600 çын ĕçленĕ пулсан, халăпах 100.000 çынна яхăн шутланаççĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланиччен пирĕн çĕршывра аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ Европăри пĕрле илсе шутланă 23 çĕршывринчен нумайрах пулнă.

Пирĕн çĕршывра саралса кайнă çав тери аслă строительство совет наукинчи çынсем валли творчество енĕпе ĕçлеме питĕ анлă майсем уçса панă. Совет ученăйĕсем вĕсене хистенипе мар, хăйсен ирĕкĕпе, хăйсен кăмăлĕпе халăхшăн ĕçлеççĕ, вĕсем киленнĕ традицисене, киленнĕ шухăшсене хăюллăн сирсе пăрахса, çĕмĕрме пĕлеççĕ. Наукăри тĕнчев ĕçĕнче çĕнĕрен çĕнĕ ĕçсем тăвасси, хăюллăн шырасси,—çакă пулса тăрать ĕнтĕ совет ученăйĕн палли енĕ.

Ленинпа Сталинăн примерĕ—наукăн чи аслă улăпĕсен, наука традицийĕсенче мĕн лайăхи пуррине пурне те гениллĕ йышăннăскерсен тата этемлĕх историйĕнче çĕнĕ çулсем хывнăскерсен, примерĕ Тăван çĕршыв чапĕмĕн совет ученăйĕсене çĕнĕрен çĕнĕ паттăрла ĕçсем тума хавхалантарать.

Совет науки нумай ĕççенче çав тери чаплă çитĕнӳсем турĕ. Иван Петрович Павловăн чаплă ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче пĕлет. Павлов физиологире çĕнĕ самана туса хучĕ. Унăн вĕрентĕвне халĕ Л. А. Орбели академик ăнăçлăн аталантарса пырать. Тăпра ĕçне çĕнĕлле тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен Глинка тата Гетройц академиксен ĕçĕ, йӳçĕк ĕçне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен Костычев академикăн ĕçĕсем практикăра çав тери пысăк усă кӳчĕç. Вернатский академик пирĕн çĕршывра геохими процесĕсене тĕпчесе вĕренес ĕçе пуçарса ячĕ. Северков академик эволюципе морфологи шкулĕн никĕсне хыврĕ. Химиксен чаплă йышĕ пысăк ĕçсем турĕ. Бах академик совет биохимин никĕсне хыврĕ; Курнаков академик химиллĕ анализ теоринче çĕнĕ çулсем уçрĕ; Фаворский академик синтезăн çĕнĕ теорине турĕ тата промышленность процесĕсен çĕнĕ явленийĕсене тĕпчесе палăртрĕ; Зелинский академик синтетически топливо тĕлĕшпе тăракан çав тери паха ыйтăва çутатса пачĕ. Губкин академик нефть геологийĕ тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсем социализм строительствйне питĕ пысăк практикăллă пулăшу кӳчĕç. 200 çула яхăн каярах Гольтбах числосен теорийĕ тĕлĕшпе тăракан çав тери йывăр проблемăсенчен пĕрине лартнă пулнă. 1937 çулта совет академикĕ Виноградов çав проблемăна питĕ чаплăн татса пама пултарчĕ. Пысăк совет ученăйĕ, чĕлхесем тĕлĕшпе ĕçленĕ Марр академик чĕлхе тĕлĕшпе çĕнĕ вĕрентӳ турĕ, халĕ çав вĕрентĕве И. И. Мещанинов академик ăнăçлăн аталантарса пырать. Геологи тĕлĕшпе туса ирттернĕ классикăллă ĕçсен шутне Карпинский академикăн ĕçĕсем кĕреççĕ, вăл пирĕн çĕршывăн Европăри пайĕн, Уралăн историллĕ геологийĕ тĕлĕшпе паха ĕçсем туса хăварчĕ.

Совет ученăйсем гитлерла Германие çапса аркатас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнчĕç. Тăван çĕршыв ирĕклĕ. хĕшĕн, Тăван çĕршыва сыхласа хăварассишĕн тата мĕнпур этемлĕх телейĕшĕн вĕсем Отечественнăй вăрçăн хаяр сулĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн çапăçури хĕçпăшалне вăйлатас тĕлĕшпе Наука Академийĕн наукăпа тĕнчев институчĕсенче сахал мар чаплă япаласем шухăшласа кăларнă, туса хатĕрленĕ. Ученăйсем фабрикăсемпе заводсенчи ĕç тухăçлăхне ӳстермелли çĕнĕ çулсем шыраса тупрĕç, хамăр Тăван çĕршывăн ресурсĕсемпе лайăхрах усă курмалли майсене кăтартса пачĕç, аманнă боецсен пурнăçĕсене сыхласа хăвармалли çĕнĕ паха япаласемпе меслетсем нумай шухăшласа кăларчĕç. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем совет ученăйĕсене наукăра çĕнĕрен те çĕнĕ, чаплă ĕçсем тума хавхалантарраççĕ.

Пирĕн наукăн паллă енĕсенчен пĕри çакă пулса тăрать: унта пĕччен çынсем мар, пĕлӳлĕхĕн тĕрлĕ енĕсенче ĕçлекен деятельсен нумай йышлă коллективĕсем ĕçлеççĕ. Сталинла ялти политикине пурнăçа кĕртни нацийĕ окраинăсем пĕр-пĕринчен уйăрăлса, хăйсен хуппи ăшĕнче питĕрĕнсе пурăнассине пĕтерчĕ, вĕсен халăхĕсене чи çӳлте тăракан культура сумне пĕрлешме май пачĕ. Ученăйсем хушшинчи тăванла сыхăну, наукăри туслăхпа тăванлăх çирĕп никĕс çинче тĕрекленсе тăрать. Пирĕн çĕршывра наукăпа унăн çыннисемшĕн партипе правительство тата пĕтĕм совет халăхĕ çав тери тимлĕн тăрăшаççĕ, вĕсем наукăна юратаççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ученăйсем пĕр-пĕринпе сыхăнса ĕçлени наукăна пĕтĕмĕшпе малалла аталантармалли чи кирлĕ условипулса тăрать. Наука Академийĕ 220 çул тултарнине чаплăн уявлани совет ученăйĕсемпе тĕнчери мĕнпур демократиллĕ государствăсен ученăйĕсем хушшинчи хальхи туслăха татах та ытларах çирĕплетĕ, аслăлатĕ. Тĕрлĕ чĕлхесемпе, тĕрлĕ меслетсемпе ĕçлесе, анчах этемлĕхĕн пĕр çӳллĕ тĕллевне пурнăçа кĕртсе пырса, пĕтĕм тĕнчери малта пыракан ученăйсем хăйсен аслă тивĕçлĕхне пурнăçласа пыраççĕ, малашне те пурнăçласа пырĕç.

Франци Сирипе тата Ливанпа хирĕçни

БЕЙРУТ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Халь нумайĕшĕ Франци Левант çĕршывĕсемпе (Сирипе тата Ливанпа) хирĕçни çинчен калаçаççĕ. Çак хирĕçӳ Ливана Франции çĕнĕ çарĕсем пынă пирки пуçланса кайнă. Сирипе Ливанра халь ларутăру питĕ çивĕчленсе кайнă.

Майăн 8-мĕшĕнче Ливанăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Апри Фараон депутатсен палатинче çапла каланă: майăн 3-мĕшĕнче Франции Сирири полномочнăй делегачĕ Бейне генерал Ливан правительствине Франции Левант çĕршывĕсенчи çарĕсене улăштарма унăн çĕнĕ чаçĕсем килни çинчен пĕлтерчĕ, тенĕ. Министр çапла шанса каланă: Германие çĕнтерни союзниксен халь Ливанра пурăнакан мĕнпур халăхĕсене хăйсен çĕршывĕсене таврăнма май парĕ, Пĕрлешинĕ пацисем Ливанăн никама пăхăнманлăхне хисеплесе пурăнĕç, тенĕ.

Майăн 23-мĕшĕнче Фараон депутатсен палатинче çапла каланă: майăн 14-мĕшĕнче эпĕ Ливан Франципе каласма пуçлама хатĕрри çинчен Бейне генерала пĕлтертĕм тата ăна çав калаçусем пуçланас умĕн Франции çĕнĕ çарĕсем Ливана килни аван мар, тесе асăрхаттартăм, тенĕ. Фараон малалла çапла каланă: Бейне генерал мана тата Сирин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне çыру пачĕ. Çав сырури сĕнӳсем Ливанра Франции пуринчен те ытларах право панă пулĕччĕç, çакă вара Ливанăн никама пăхăнманлăхне хирĕç пынă пулĕччĕ», тенĕ. Çавăнпа та Ливан правительстви Ливанăн никама пăхăнманлăхне пĕтерме пултаракан çав сĕнӳсем тăрăх калаçма килĕшмест, тенĕ.

ПАРИЖ, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, Бейне генерал майăн 26-мĕшĕнче Рейтер агентствин корреспондентне çапла каланă: Франци Левантă та, Франции те кăмăла каннă килĕшӳ тавасран пăрăнмасть, анчах халиччен Левант Франции нименле сĕнӳ те туман-ха, тенĕ. Бейне малалла çапла каланă: Левант çĕршывĕсенче халь Франци çарĕсем темиçе уйăх каярах пулнă чухлех тăраççĕ теме пулать. Пурте пĕлеççĕ, сывăхри Хĕвелтухăçĕнче Британин хĕçпăшаллă вăйĕсем те пур, анчах та вĕсем унта пурăнни никама та пăшăрхантармарĕ, çав вăхăтрах Франци çарĕсем килни Левантри питĕ нумай çынсене пăшăрхантарчĕ, тенĕ. Бейне Сирире пăлханусем Ливанринчен ытларах сарăлни çинчен пĕлтернĕ.

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 26-мĕшĕнче Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви заявлени пичетлесе кăларнă. Çав заявленире вăл çапла каланă: Сирипе Ливанра лару-тăру лайăхланса пиҫиҫне Франции хăшпĕр çарĕсем унта пыни пăсса хучĕ, çакăн пирки вара Левантпа Франци правительстви хушшинчи ĕçсене пĕтĕмĕшле йĕркелесе ярасси пирки пынă каласусем те пĕтсе ларчĕç, тесе хурланса пĕлтернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Дамаскри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Дамаск хулинче çĕрĕпех пăшалсемпе, çав шутра миномĕтсемпе те пĕр йĕркесĕр персе тăнă. Франци власĕсен Сирире 2.000 салтака яхăн пур, вĕсенчен 1.200 салтак—сирипецсен çар çыннисем.

Сири власĕсен 1.200 полицейски пур. Вĕсен винтовкăсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем пур. Куншăлсем пур. Кунсар пуçне, Дамаск хулинчи халăх хăй те вăйлă хĕçпăшалланă.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Сири премьер-министрĕн ĕçĕсене вăхăтлăха туса тăракан Джамиль Мардам хаçат представителĕсене çапла каласа панă: ĕнер Франци çарĕсем Хама хулинчи халăха пенĕ, çакăн хыççăн вара «Хама хулинчи халăх французсен гарнизонне тапăннă. Франци власĕсем Хомсран çĕнĕ вăйсем чĕнсе илнĕ. Халĕ Хама урамĕсенче çапăçаççĕ».

БЕЙРУТ, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Саут Аш-Шааб» хаçат çапла пĕлтернĕ: Дамаскра тата Сирири ытти хуласенче пуçланса кайнă пĕтĕмĕшле забастовка халĕ те чарăнмасть. Шкулсенче вĕрентме чарăннă пирки, шкул çурчĕсенчен жандармери, полици тата нацигвардийĕ валли казармăсем туса хунă.

Ливанра пурнăç йĕркеллĕ пырать. Пур магазинсемпе учрежденисем те ĕçлеççĕ

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Франции ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо министрсен кабинетĕнче çапла каланă: Франци Сирипе Ливана тытса тăмалли мандата пăрахман. Франци, çак никĕ çĕршыва никама пăхăнмасăр пурăнакан çĕршывсем туса хурасшăн, анчах та вăл чи малтан Франции унти экономикăпа культура интересĕсене сыхласшăн, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Бейрутри корреспонденчĕ Дамаскран илнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: Хама хулинче Франци çарĕсемпе Сири çыннисем хальте çапăçаççĕ-ха, унта Франци танкĕсем французсен гарнизонне вăйлатнă.

Сири çынниземпе тытăçмалла ан пултăр тесе, Франци çарĕсене пур çĕрте те казармăсенче усраççĕ. Франци гражданĕсене, кирлĕ пулсан часах урăх çĕре илсе кайма май пултăр тесе, хулари уйрăм вырăнсене пухаççĕ.

Дамаск хулипе Алеппо хулинче лăпкăрах.

Сирипе Ливанра çамрăксен организацийĕсем отрядсем тăваççĕ.

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Сирипе Ливан миссийĕсем паян каçхине заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Дамаскран килнĕ хыпарсем тăрăх, ĕнер, каçхине 9 сехетре, французсем Дамаск хули çине бомбăсем пăрахнă тата пенĕ. Англи посланникĕ хутшăнсан, хула çине бомбăсем пăрахма чарăннă, анчах та ăна çаплах переççĕ-ха».

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ Никольсон Дамаскран çапла пĕлтерет: Дамаск хулинче ĕнер каçхине тата паян ирхине те çапăçнă. Пуç тăрринчен миртсе каякан снарядсем шăхăрни тата пулеметсемпе пĕр чарăнмасăр пени çĕрĕпех илтĕнсе тăнă, вĕсен сассисем тул çулăлас умĕн пĕр кĕске вăхăт хушши кăна чарăнса тăнă. Пур тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе те усă курнă: пăшалсемпе, автоматсемпе, пулеметсемпе, хир тупписемпе тата мортирăсемпе.

Тĕттĕм пулсан часах пĕлĕт çине çулăм çути ӳкнĕ, хулана тата хула çийĕпе вĕçсе çӳрекен Франци самолечĕсене çутатса янă.

Çын мĕн чухлĕ пĕтни паллă мар-ха.

СИРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН ИДЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче Сирири «питĕ çивĕч лару-тăру çинчен» каласа панă, вăл çапла пĕлтернĕ: Британи правительстви урăх ăлкра тăма май çук тесе шутларĕ. Премьер-министр де Голль генерала çапла пĕлтерчĕ: Британи правительстви, «урăх юн юхтармалла ан пултăр тесе, Сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйсен главнокомандующине çав ĕçе хутшăнма приказ пачĕ, çакна вăл питĕ пăшăрханса турĕ». Де Голль патне янă сырура Черчилль де Голльрен Франци çарĕсене урăх пеме чарăнма тата, Англипе Франци çарĕсем пĕр-пĕринпе тытăçмалла ан пултăр тесе, Франци çарĕсене халех казармăсене таврăнма хушма ыйтрĕ, тенĕ.

Оппозици лидерĕ Эттли лейборист çапла каланă: Англин «ответлăха хăй çине илсе, çĕнĕрен йĕрке тума хăтланса пăхмалла», тенĕ тата вăл хальхи хирĕçĕве татса панă хыççăн Франци çарĕсене те, Англи çарĕсене те Сирирен илсе тухмалли çинчен калана.

Иден Сирирен Англи çарĕсене илсе тухас тĕлĕшпе Эттли каланипе килĕшнĕ.

ДАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

КОПЕНГАГЕН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Данири пурнăç халĕ те яланхи йĕркене кĕрсе çитмен-ха. Дани халăхĕ халĕ те йывăр пурнăçпа пурăнать. Нимĕçсем çапăлах Данирен тухса кайса пĕтмен. Квислинговецсем нумайĕшĕ халĕ те ирĕкре пурăнаççĕ.

Союзниксен командованийĕ йышăннă тăрăх, Данире тăнă нимĕçсем хăйсем мĕнле пултарнă çав майпа Германи чикинче ситмелле те унта хăйсен хĕçпăшалне памалла, вара малалла тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсене каймалла. Ку тараннăй чикĕ урлă 100.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ ытла каçнă. 30.000 нимĕç çул çинче е хăйсен казармисенчех пурăнаççĕ-ха. Унсăр пуçне, Данире вăрçăра аманнă нимĕçсем 100.000 çын ытла тăрса юлаççĕ тата ытти çĕрсенчен тарса килнĕ 300.000 нимĕçе яхăн пур.

Халĕ кунта Данири квислинговецсене мĕн тăвасси питĕ çивĕччĕн тăрать. Нимĕçсемпе пĕрле ĕçленĕ Дани çыннисем нумайĕшĕ халĕ те ирĕкрех çӳреççĕ. Данире квислинговецсен хутне кĕрекенсем нумай тупăннă. Хăшпĕр вăйлă ушкăнсем патриотсене квислинговецсене тытса хупас ĕçрен аякалла сирсе яма хăтланнă. Çав ушкăнсем çапла сăлтав тупса каланă: çавăн пек «чипер» ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕ полицейскисем кăна тума пултараççĕ, тенĕ. Нимĕçсемпе экономика тĕлĕшĕнчен килĕшсе ĕçленĕ ушкăнăн хăшпĕр паллă çыннисене тытса хупма тытăнасан та патриотсене вăйлăн кансĕрлеттĕнĕ.

ЧАН КАЙ-ШИ ĔÇ ТАВАКАН ЮАНЬ ПРЕДСЕДАТЕЛĔНЧЕН ТУХНĂ

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Наци правительствин президенчĕ Чан-Кай-ши ĕç тăвакан юань председателĕнчен (урăхла каласан, премьер-министр вырăнĕнчен) тухнă. Унăн вырăнне халĕ Сун Цзы-вень йышăннă.

Чан Кай-ши йышăнса тăнă Ĕç тăвакан юань председателĕ вырăнĕнче юлашки пилĕк уйăх хушшинче Сун Цзы-вень ĕçлесе тăнă. Вăл ку тараннăй Ĕç тăвакан юань председателĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ шутланса тăнă.

ЭЛЕОНОРА РУЗВЕЛЬТ СТАТЬИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем вилнĕ Рузвельт президент арăмĕн Элеонора Рузвельтăн статьине пичетлесе кăларнă. Статья ячĕ çапла: «Союзниксем хăраса тăни». Çав статьяра Элеонора Рузвельт юлашки вăхăтра хăшпĕр ушкăнсем Совет Союзĕнчен хăратас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçланнине сивлет. Вăл çапла калать: çавăн пек çынсем юри е хăйсем пĕлмесĕр пирĕн тăшмансене—фашистсене пулăшаççĕ, тет.

«Эпĕ çапла шутлатăп,—тет Элеонора Рузвельт хăйĕн статьинче,—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче нацистсемпе фашистсене чăн-чăнах пулăшасчĕ тесе ĕçлекен çынсем пурах-ха. Анчах вĕсемсĕр пуçне халăхсем хушшинчи пулас мирăе пурнăçа хăйсем пĕлмесĕр сиенлекен çынсем те нумай. Кун пек çынсем, чи малтан, хăранипе çапла ĕçлеççĕ. Кун пек çынсем акă мĕнрен хăраççĕ: вĕсем хăйсен государство деятелĕсем ытти государствăсен деятелĕсемпе тумалли ĕçсене вĕсемпе тан тăрса туса пыраймĕç тесе хăраççĕ. Унтан вĕсем çакăнтан хăраççĕ: эпир малашне тĕнчери вăйлă халăхсемпе ăмăртса пыма пултараймăпăр, теççĕ, çавăнпа та вĕсем ытти халăхсене хăйсенчен вăйсăртарах тума тăрăшаççĕ. Вĕсем Российăран хăраççĕ, çавăнпа та вĕсем Германие ытла хытах вăйсăрлатма юрамасть, тесе шутлаççĕ. Вĕсем Великобританирен хăраççĕ, çавăнпа та пирĕн Великобритани вăйланса пынине пур майсемпе те чарма тăрăшмалла, теççĕ. Хăратпăр, тенĕ сăмаха вĕсем час-часах каласаççĕ. Çав çынсем ытти халăхсем е ытти правительствăсем çинчен кирек мĕнле тивĕçсĕр сас-чӳ сараççĕ, вĕсем çав хыпарсем тĕрĕссине суйине тĕрĕслесе кĕтсе тăмаççĕ, çав хыпарсем тĕрĕс пулсан—вăл ĕçсем мĕн пирки тухнине ăнланма тăрăшмаççĕ...

Эпĕ çапла шутлатăп: эпир хамăра çирĕп ĕненсе шанса тăрсан çеç халăхсем хушшинчи мирлĕ пурнăçа тума пултараймăпăр; хамăра-хамăр шанса тăмасан, халăхсем хушшинче мирлĕ пурнăç тăвасса шутламалли те çук. Эпир хамăр союзниксенчен урăхларах пулма пултаратпăр. Эпир ку тараннăй те вĕсенчен урăхларах пулнă. Эпир хамăр пĕрре панă сăмаха çирĕп тытса пырсан, ыттйсем вара ирĕксĕрех пирĕн вăя ĕненме пуçлĕç, мĕншĕн тесен çав вăй ырă ирĕклĕ çынсенчен тухса тăрать, мĕншĕн тесен çав çынсен чĕринче хăрасран хăтарса тăракан юрату пур».

ПОЛЬШАН ЭМИГРАЦИРИ «ПРАВИТЕЛЬСТВИН» ЧИНОВНИКĔ ПУЛНАСКЕР ПОЛЬША ЫЙТĂВĔ ПИРКИ СЫРНИ

ОТТАВА, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Торонто хулинче тухса тăракан «Стар» ятлă хаçат çак кунсенче Ставинский докторăн статьине пичетлесе кăларнă. Ставинский доктор Польшăн эмиграцири «правительствин» информацин министерствинче ĕçлесе пурăннă, вăл нумай пулмасть Лондонран Канадăна пынă. Вăл çав «правительствăн» министерствинче унти пуçлăхсен ĕçĕсемпе килĕшмен пирки ĕçлеме пăрахнă. Ставинский хăйĕн статьинче çапла сырать: поляксен ыйтăвне тата çак панă чухне чи кирлине—Польша халăхне манаççĕ. Малалла Ставинский Польша халăхĕ, уйрăмăнах илсен Польша хресченĕ, мĕнле пурăннине тĕплĕн пăхса тухать. Вăл Польшăна аграрнăй çĕршыв тесе шутлать, Польша Европăри ытти çĕршывсенчен ытларах никех тӳрĕ, тет. Малалла вăл çакна астутарать: Польшăра власть пуçĕнче тăнă класс 1920 çулта Российăна хирĕç вăрçнă чухне, хресчен халăхĕ ăна пулăштăр тесе, хресченсене сĕр пама пулнăччĕ, анчах та хăйĕн сăмахне вăл пурнăçа кĕртмерĕ. Ставинский, Польшăра халĕ тунă сĕр реформине ырласа, çапла сырать: пĕр миллион çурă çынна ытла сĕр парса ырă тунă ĕнтĕ, тет. Малалла вăл çакна асăрхаттарса сырать: поляксен Лондонри «правительстви» çак питех те паха ыйту тĕлĕшпе хăй çине нименле обязательство та илмен.

Малалла Ставинский Польшăри вăхăтлăх правительство Польша халăхĕшĕн тунă ырă ĕçсем çинчен сырать те çакна кăтартса парать: Польшăри хресченсем вăхăтлăх правительствăна пулăшса пыни çакăнтан килет те ĕнтĕ, тет. Çавăн пиркйех Польшăри вăхăтлăх